### Çирĕп сывлăхлă пулма

Çирĕп сывлăхлă пулма
Ирпе ирех тăмалла,
Физзарядка тумалла,
Сив шывпа çăвăнмалла,
Тĕрĕс апатланмалла,
Хăвăрт-хăвăрт чупмалла.
Мунчана кайсан вара
Милĕкпе çапăнмалла.
Эс чирлемĕн нихăçан
çирĕп сывлăхлă пулсан.

*Настя Ердукова,*
6 класс

### Йăнăшна ăнлан

Ашшĕ вăрçать ывăлне:
- Ма туртатăн чĕлĕмне?
Пулаймастăн эсĕ пысăк,
Сывлăху пулать сан пăсăк.

Вăл чĕнмерĕ ашшĕне,
Айăплăн чикрĕ пуçне:
«Ман атте хăй те туртать,
Мана мĕншĕн-ши вăрçать?»

— Эпĕ тунă йăнăша
Ан ту эсĕ пурнăçра.
Çак усал наркăмăша
Ан хып урăх çăвара.
Ĕмĕре вăл кĕскетет,
Сывлăха та пĕтерет.
Чĕлĕмĕн усси сахал,
Хăвна çеç тăвна усал,—
Терĕ ашшĕ тарăхса,
Хăйĕн айăпне туйса.
Ача ăнланчĕ ашшĕне,
Урăх туртмĕ ĕмĕрне.

*Наталья ТЮРИНА,*
7 класс ертўçи.

### Савăнса пурнар

Ачалăх çулĕсем...
Хаваслă вăхăт.
Иртеççĕ вĕсем
Ах, питĕ хăвăрт.

Кун хыççăн кун,
Çул хыççăн çул...
Пĕтертĕн шкул
Суйла эс çул.

Çулсем, çулсем...
Нумай вĕсем.
Суйла кирлине,
Чун хушнине.

Çамрăк вăхăт,
Шухă вăхăт...
Çăмăл йăнăшма,
Пурнăçа пăсма.

Сăра, пирусра
Туса шырар мар.
Сывă пурнăçпа
Савăнса пурнар.

*Ирина Саватеева,*
7 класс

*/Сăвăсене Шурча шкулĕнчи «Ассорти» хаçата кăларакан редакци ярса панă/*

# ÇĂЛТĂРСЕМ ПАТНЕ ÇУЛ

**/ФАНТАСТИКА/**

**/Пуçл. 2$^{1}$-òå /**

Сасартăк такам чўречерен юрпа пени илтĕнчĕ. Коля урамалла пăхрĕ, унта тăваттăмĕш классри Ваньăна курчĕ, пўрте чĕнчĕ. Магретта Кольăн кушакĕ пек пулса тăчĕ. Ачасем мĕн пирки калаçнине итлеме сĕтел айне кĕрсе выртрĕ.

— Кĕрех, кĕр — терĕ Коля Ваньăна. — Мĕн сан аллунта?

— Эпĕ библиотекăна — Атя, эсĕ те пырăн ! — терĕ.

Ваня тĕлĕнсе кайнипе хыçалалла чакрĕ, тухса каяс тесе алăка уçрĕ.

— Эсĕ ан хăра, ку — Магретта. Вăл Валаси планетинчен, — лăплантарчĕ ачана Коля.

— Эпĕ санăн историе лайăх итлерĕм, пĕчĕк пулсан та икĕ йытта хирĕç тăма хăраман. Валаси патши икĕ ачана илсе пынăшăн нимех те калăх вăл сирĕн, кам унта пурăнать? — тĕпчерĕ Коля.

— Пирĕн патшалăха авалхи Мурренсем пуçарса янă, — пуçларĕ хăйĕн калавне Магретта. — Унта питĕ илемлĕ хуласем пулнă, пуянсемпе чухăнсем пулман вăл вăхăтра. Пурте савăнса пурăннă. Анчах, Талдер патша вилсен Муррен халăхĕ çине Рабаллак ăрăвĕ тапăннă, таптанă, вĕлернĕ. Пирĕн йăх çавна чăтайман,



утаттăм. Сасартăк йытăсем вĕрнĕ сассем илтрĕм. Йытăсем енне чупрăм. Иккен хаяр чĕрчунсем сирĕн Кузя кушак çине тапăннă. Эпĕ частарах патак илтĕм те йытăсене хăваласа ятăм. Акă!—-терĕ те ача, хăйĕн аллинчи татăка уçса, кушака хуçине тыттарчĕ.

— Ах! Мĕн пулнă санпа, Кузя?

— Унăн урине ыраттарнăччĕ те эпĕ ăна бинтпа çыхса ятăм.—терĕ Ваня

— Тавтапуç сана, Ванюш!

Çак сăмахсем хыççăнах Магретта сĕтел айĕнчен тухрĕ те Ваня патне пырса: ламĕ пуль, — терĕ Магретта.

— Атьăр, васкамалла.

Кушакпа икĕ ача пўртрен тухса пахчаналла утрĕç, çырмана анса кайрĕç. Утсан-утсан вĕсен умне пысăк Валаси звездолечĕ килсе ларчĕ.

— Арра Мяу Мур!— терĕ те кушак, звездолет алăкĕ уçăлчĕ. — Иртĕр, ан хăрăр, шире вăрăм та интереслĕ çулçўрев кĕтĕ.

Тепĕр самантранах Çĕр планета нумай-нумай çухрăмра юлчĕ.

— Магретта, — ыйтрĕ Ваня — шире Валаси планети çинчен каласа пар-ха?

— Чăнах та, — мĕнле патшалăх кăнтăралла, Лонгер тăвĕсем çинелле кайнă.

Халĕ те эпир çавăнта пурăнатпăр. Çапах та ăна кушак патшалăхĕ тесе калаймăн. Пирĕн çĕр-шыв çине халĕ те Рабаллак йăхĕнчи салтаксем тапăнаççĕ. Çавăнпа та Валаси патши, Талдер ывăлĕ Претен, сирĕн пата мана ячĕ.

Арçын ачасем калава итленĕ вăхăтра вĕсем темĕнле планета çине килсе ларчĕç...

**/Малалли çитес номерте/**
**Соколов Дима,**
**Калайкасси шкулĕ, 9 класс**

**ЛОГИКА**

**2 ТАВАР ТУЯНАКАН**

Хăлха илтмен çын карандашсене шĕвĕртмелли хатĕр туянма канцтовар лавккине кĕрет. Пĕр пўрнине сулахай хăлхине чикет, сылтăм хăлхи патĕнче чăмăрпа çавăрма пуçлать. Сутуçă çынна мĕн кирлине тўрех ăнкарать.

Кайран çав магазина суккăр çын кĕрет. Унăн хачă туянмалла пулнă. Вăл хăйне хачă кирлине сутуçăна мĕнле ăнлантарса парать?

/Шпаргалка 10 стр-ця́ра/